2022-2023-мӗш вӗренӳ ҫулӗ

Шкул шайӗнчи олимпиада

Чӑваш чӗлхипе литератури (Чӑваш шкулӗ)

8 класс

Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вӑхӑт – 90 минут

Кашни ыйтӑва тӗрӗс хуравласан чи нумайӗи 50 балл пухма пулать

1.Ҫак йӗркесен авторне тӗрӗс палӑртӑр. Пӗрремӗш клеткӑна автор хушамачӗн малтанхи сас паллине ҫырӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 5 балл.*

*Юрланӑ чух сассу хитре те уҫӑ:*

*Итлет вӑрман та хир те янраса.*

| | | | | |
|---|---|---|---|---|

2. *Хмель, хомут, камыш* сӑмахсене чӑвашла куҫарӑр. Малтанхи сас паллине иккӗмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 6 балл.*

3. _________ *куҫу курнине сулахай куҫу ан куртӑр.* Сиксе юлнӑ сӑмаха тӗрӗс тупса палӑртӑр, пӗрремӗш сас паллине виҫҫӗмӗш клеткӑна ҫырса хурӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 4 балл.*

*4.* 1-мӗш ыйтура панӑ сӑвӑ йӗркисенче хӑш сӑмах хыҫҫӑн чарӑну палли сиктерсе хӑварнӑ? Сӑмахӑн юлашки сас паллине тӑваттӑмӗш клеткӑна ҫырӑр. Чарӑну палли лартнин сӑлтавне ӑнлантарӑр. *Сӑмахне тӗрӗс тупнӑшӑн -3 балл, ӑнлантарнӑшӑн- 2 балл. Пӗтӗмпе – 5 балл.*

5. *Укҫапа пуиччен туспа пуй.* Сиктерсе хӑварнӑ сас паллине тупӑр. Сӑмах мӗнле пуплев пайне кӗрет? Тупнӑ сас паллине пиллӗкмӗш клеткӑна ҫырӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 4 балл.*

6. Хусанкай, Ҫеҫпӗл, Бичурино ялӗсем малтан мӗн ятлӑ пулнӑ? *Тӗрӗс хуравшӑн – 6 балл.*

7. Елен Нарпи ҫырнӑ пӗр калавра мӗнле укҫа пирки сӑмах пырать?. *Тӗрӗс хуравшӑн - 5 балл.*

8. Мӗн вӑл мӑнлату? *Тӗрӗс хуравшӑн – 4 балл.*

9. Ҫыравҫӑсен хайлавӗсене тӗрӗс шыраса тупӑр. *Тӗрӗс хуравшӑн – 6 балл.*

1.Авторсем: Кипек Мӗтри, Федор Павлов, Людмила Сачкова

2.Хайлав ячӗсем: «Шӑпӑрлан», «Кайӑк тусӗ», «Хитре».

10. Хӑвӑр таврашра ҫуралнӑ паллӑ чӑваш ҫынни ҫинчен ҫырса парӑр. *Тулли хуравшӑн - 5 балл.*